27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
2
ЭРНЕКУН
108(6603) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔ
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Торф кăларас ĕçе хăвăртлатар

Торф промышленноçĕ хĕрӳллĕ те ответлă тапхăра кĕчĕ. 1944 çулта торф кăлармалли государство планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртессине çуллахи ĕçсем татса парассĕ. Çавăнпа ĕнтĕ халĕ, çуллахи вăхăтра, торф кăларакан предприятисен пĕтĕм ĕçне большевикла организацилес пулать. Çапла хушассĕ фронтпа çĕршыв интересĕсем.

Торф промышленноçĕнчи малта пыракан Шатурăри торф предприятийĕсен коллективĕ, Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне сӳтсе-явнă хыççăн, хăй çине татăклă обязательствăсем илсе, ССР Союзĕнчи торф промышленноçĕнчи мĕнпур рабочисемпе работницăсене тата инженерла-техникла работниксемпе служащисене социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каларĕ. Шатуровецсем чĕнсе каланине пирĕн республикăри торф предприятийĕсенчи рабочисем те тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, плана ирттерсе тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Çапла, Çĕмĕрлери торф предприятийĕнчи стахановка Екатерина Ортикова юлташ халех ĕнтĕ сезонри задание тултарнă. Халĕ икĕ сезон нормине тултарассишĕн кĕрешет. Çавăн пекех Татьянăпа Наталья Трифоновăсем кулленхи нормăна 300-шер процент тултараççĕ. Ун пек ĕçлекенсем кашни предприятирех вуншарăн шутланаççĕ.

Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра торф кăларасси юлса пырать-ха. Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Улатăрти предприятисем сезон пуçламĕшĕнчех хăйсен планне тултарса пымаççĕ-ха. Шупашкарти предприяти графика 50 процент таран çеç тултарать. Çĕмĕрлепе Улатăрти предприятисем те нумай мала кайман. Уйрăмах торф кăларасси районсене пăхăнакан предприятисенче начар пырать. Çапла вара республикăри торф промышленноçĕ сезон пуçламĕшĕнчех çĕршыв умĕнче парăма кĕчĕ.

Торф кăларасси çавăн пек юлса пынин, чи малтанах, предприятисенче ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕксĕр мобилизациленинчен килет. Хальхи тапхăрта предприятисенче ĕçлемелли ĕç вăйĕн 24 процентне çеç мобилизациленĕ. Ĕç вăйĕ мобилизацилес енĕпе уйрăмах Калинино, Çĕмĕрле т. ыт. районсем юлса пыраççĕ. Калинино районĕнчен пурĕ 145 çын ĕçлемелле пулсан, паянхи куна 38 çын çеç ĕçлет.

Торф предприятийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем палăраççĕ. Шупашкарти предприятире механизмсемпе тивĕçлĕн усă курмаççĕ, ĕç хатĕрĕсем тата транспорт инвентарĕ çителĕклĕ хатĕрлемен. Рабочисем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе начар йĕркеленĕ. Рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн ытти предприятисенче те начар тăрăшаççĕ. Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ торф промышленноçĕнчи рабочисем валли апат-çимĕçсем тăратас ĕçе кирлĕ пек организацилемен.

Торф кăларасси — сезонлă ĕç. Çавăнпа та çуллахи хĕрӳ вăхăтра торф предприятийĕсен ĕçĕнче нимĕнле сӳрĕклĕх те, çавăрăнăçусăрлăх та пулмалла мар. Кашни кун хаклă, кашни кунпа туллин усă курмалла тăвас пулать. Çавна тума пирĕн пур условисем те, майсем те çителĕклĕ. Предприятисен руководителĕсемпе партипе совет организацийĕсем ответлăха туйса, большевикла ĕçлеме тытăнни çеç кирлĕ.

Вăхăта вăрăма ямасăр, торф предприятийĕсенче ĕçлеме кирлĕ таран ĕç вăйĕ мобилизацилемелле. Рабочисене тухăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисене пĕтĕмпех туса памалла. Ĕç хатĕрĕсемпе транспорт инвентарĕ çителĕклĕ пулччăр. Столовăйсем, ларексем йĕркеллĕ ĕçлеччĕр. Апат-çимĕçсем вăхăтра тăратмалла.

Партипе комсомол организацийĕсем торф предприятийĕсене кулленхи ĕçре пулăшса пыма тивĕçлĕ. Торф предприятийĕсенче ĕçлекенсем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе йĕркелесси çине тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Предприятисенче ĕçлеме пыракансем тĕнчери ларутăрăва, хамăр çĕршыври çĕнĕ хыпарсене вăхăтра пĕлсе тăма пултарччăр. Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла. Кашни рабочипе работницăна малта пыракан стахановецсен опычĕпе ĕçлеме вĕрентмелле.

Шатурăри торф предприятийĕсен коллективĕ планран ирттерсе 75.000 тонна торф кăларма, электростанци складĕнче 100.000 тонна торф запасĕ тума пулнă. Ку—питех те паха обязательство. Çакăн пек обязательствăна пирĕн республикăри торф предприятийĕсен коллективĕсем те пурнăçа кĕртме пултараççĕ, пурнăçа кĕртмелле те.

Торф промышленноçĕнчи работниксем Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне Торф кăлармалли государство планне пĕтĕмпех тата ирттерсе тултарнипе ответлеме пулчĕç. Çакна пурнăçа кĕртни —пирĕн çĕршыври заводсемпе фабрикăсене фронт валли хĕçпăшалсемпе вăрçă техники ытларах кăларма май туса парать. Çакă вăл тăшмана сĕнтересс сехетне çывхартать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЯССЫ хулинчен çурçĕртерехри районра тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳссе, тăшман пирĕн оборона ăшне кăштах саваланса кĕнĕ. Малтанлăха пухнă даннăйсем тăрăх, пирĕн çарсем кун каçиччен нимĕçсен 50 танкне çĕмĕрсе тăкнă, 36 самолетне персе ӳкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Майăн 29-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 16 самолетне персе ӳкернĕ.

МАЙĂН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 31-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЯССЫ хулинчен çурçĕртерехри районра тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ. Кун каçиччен пирĕн çарсем нимĕçсен 27 танкне çĕмĕрсе тăкнă, тăшманăн 58 самолетне персе ӳкернĕ.

Тĕрĕслесе тухнă даннăйсем тăрăх, ЯССЫ хулинчен çурçĕртерехри районра майăн 30-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем тăшманăн 95 танкне çĕмĕрсе тăкнă тата нимĕçсен 106 самолетне персе ӳкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Майăн 30-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 97 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 142 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Яссы хулинчен çурçĕтерехре тăшман çапăçăва пысăк вăйсем кĕртсе янă, ĕнер пирĕн оборона ăшне кăштах саваланса кĕнĕ участокра хăйĕн çитĕнĕвне вăйлатма хăтланнă. Нимĕçсен танкĕсемпе пехоти совет позицийĕсене кунĕпех таттисыпписĕр атакăланă. Тăшман питех те пысăк çухатусем тӳснĕ, çапах та пĕр утăм та малалла куçма пултарайман. Совет пехотинецĕсем, артиллерисчĕсем тата танкисчĕсем, çав тери хăватлăн персе тата хирĕç пыра-пыра çапса, гитлеровецсен пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе пин вилли выртса юлнă, нимĕçсен çĕмĕрсе тăкнă е çунтарса янă танкĕсем, хăй тĕллĕн çӳрекен тупписсемпе бронетранспортерĕсем нумай тăрса юлнă. Фронтăн çак участокĕнче нимĕçсен командованийĕ авиацин пысăк вăйĕсене çапăçăва кĕртнĕ. Пирĕн летчиксемпе зенитчиксем тăшман авиацийĕн тапăнăвĕсене ăнăçлă сире-сире яраççĕ, икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 164 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çĕрле пирĕн разведчиксен ушкăнĕ тăшман тăнă вырăна кĕрсе кайнă та нимĕçсен телефон пралукне касса татнă. Ку пралук нимĕçсен артиллери батарейине наблюдательнăй пунктпа çыхăнтарса тăнă. Часах пралука татнă вырăна икĕ нимĕç пырса çитнĕ. Мирошинпа Белоусов разведчиксем вĕсенчен пĕрне чиксе пăрахнă, теприне прикладпа çапса антратса янă та тыткăна илнĕ. Çак хушăра блиндажсенчен пĕр ушкăн нимĕç чупса тухнă. Цыганов разведчик пулеметпа персе 30 гитлеровеца çити вĕлерсе тăкнă е амантнă. Тăшман пăтрашса кайнă хушăра пирĕн разведчиксем фронт линийĕ урлă лайăххах каçнă та тыткăна илнĕ нимĕç салтакне хăйсен чаçне илсе пырса панă.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман темиçе хутчен те пирĕн позицисене çапăçса пĕлме хăтланнă. Пирĕн подразделенисем тăшман шухăшне пĕтерсе лартнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 100 вилли ытла выртса юлнă.

Павлович капитанăн подразделенийĕнчи снайперсем 4 кун хушшинче 72 гитлеровеца вĕлернĕ. Снайпер Шикерук юлташ 9 нимĕçе, снайпер Кондратюк юлташ 6 нимĕçе, снайпер Мартынюк юлташ 4 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен кăнтăртарахра çĕрле пирĕн разведчиксем нимĕçсен траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Совет боецĕсем гитлеровецсен пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Темиçе салтака тыткăна илсе тата 8 пулеметпа 2 миномет тытса илсе, разведчиксем хăйсен подразделенине таврăннă.

* * *

Дрогобыч облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ майăн 14-мĕшĕнче пĕр ялта çирĕпленсе ларнă тăшмана атакăланă. Совет патриочĕсем 80 нимĕçе вĕлернĕ. 13 салтакпа пĕр нимĕç офицерне тыткăна илнĕ. Пĕр апат-çимĕç складĕ, пĕр радиостанци, 47 винтовка, 10 лав тата 2 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Берлинран панă приказ тăрăх, Венгрире пуçпулса тăракан шайка Венгри салтакĕсене, тĕрлĕрен асап кăтартассипе хăратса, Совет Союзне хирĕç вăрçтарасшăн. Анчах та венгер салтакĕсем нумайĕшĕ, террортан хăраса тăмасăрах, совет çарĕсем енне каçаççĕ. Çак юлашки кунсем хушшинче кăна Украинăри 1-мĕш фронтра Хĕрлĕ Çар енне темиçе çĕр венгер салтакĕ каçнă. Пĕр часть тăракан вырăна венгерсен 27-мĕш çăмăл пехотнăй дивизийĕнчен каçнă сакăр салтак çапла каласа кăтартнă: «Çак кунсенче пире офицерсем корпус командирĕн приказне вуласа пачĕç. Приказра çапла каланă: вырăссем енне каçнă салтаксен арăмĕсене, ачисене тата çемьери ытти çыннисене те персе пăрахассĕ. Вĕсен килти мĕнпур пурлăхне туртса илессĕ, тенĕ. Венгер халăхне сутакансем, çавăн пек приказсем кăларса, Венгри салтакĕсене фронтра тытса чарасшăн, вĕсене Гитлершăн вĕлерттересшĕн. Анчах та вĕсем пур салтаксене те хăратса пăрахайрас çук. Эпир нимĕçсемпе пĕр пулса вăрçасшăн мар, çавăнпа та вырăссем енне куçрăмăр».

Çак ушкăн хыççăн çав дивизиренех тата утă салтак тыткăна парăннă. Вĕсенчен пĕри, Иштван К. ятли, çапла каласа кăтартнă: «Çĕрле эпĕ тата манăн икĕ юлташ вырăссене тыткăна парăнма тухрăмăр. Питĕ тĕттĕмччĕ, çавăнпа эпир ниепле те çул тупма пултараймарăмăр. Пăтранса çӳресен-çӳресен, эпир тул çуталличчен пĕр пушă пӳрте кĕрсе лартăмăр. Часах такамсем утса килни тата алăкран шаккани илтĕнчĕ. Пӳрте 3 çын кĕрсе ларчĕç. Курăнманнипе кам кĕнине пĕлме пулмарĕ. Эпир малтанах çапла шухăшларăмăр: ротăра эпир суккине асăрхарĕç пулĕ те командир пире хăваласа çитсе тытма янă пуль, терĕмĕр. Эпĕ хам та пĕлместĕп, венгерла темскер каласа ятăм, унтан темиçе сăмах вырăсла каларăм. Хайхи паллă мар видĕ çын аллисене çӳлелле çĕклерĕç. Вара кусем кам пулни паллă пулса тăчĕ. Çаксем пирĕн полкри салтаксемех, анчах та урăх батальон çыннисем пулчĕç. Вĕсем те, пирĕн пекех, тыткăна парăнма тухнă иккен, анчах та çул çинче çухалса кайнă. Вара эпир пурте ирхине ирех вырăссен позицийĕсем патне аванах çитрĕмĕр».

Çав кунах пирĕн çарсем тăракан вырăна çав дивизиренех 57-мĕш полкри 18 салтак килнĕ. Вĕсем хăйсемпе пĕрле хăйсен винтовкисене, пĕр пулемет, гранатăсем тата 3.000 патрон илсе килсе панă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Евпатория хулинче Совет Союзĕн Геройне— авиацин гварди генерал-майорне Н. А. Токарева памятник лартасси çинчен тата Хура тинĕс Флочĕн Сывлăш-Çар Вăйĕсен минăсемпе торпедăсем пăрахакан 1-мĕш авиаци дивизине Н. А. Токарев ятне парасси çинчен

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре геройла çапăçса вилнĕ Совет Союз Геройĕн — авиацин гвардии генерал-майорĕн Н. А. Токаревăн ятне ĕмĕрлĕхе палăртса хăварас тесе:

1. Хура тинĕс Флочĕн Сывлăш-Çар Вăйĕсен минăсемпе торпедăсем пăрахакан 1-мĕш Авиаци Дивизине Н. А. Токарев ятне парас.

2. Евпатория хулинче Совет Союзĕн Геройне — авиацин гварди генерал-майорне Н. А. Токарева памятник лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1944 çулхи майăн 31-мĕшĕ.

Çуракине вĕçлемелли вунăкунлăх

Красноармейски, Вăрнар, Чурачăк районĕсем хыççăн Çĕрпӳ, Элĕк, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕр районĕсем çураки планне тултарчĕç

ÇĔРПӲ, майăн 30-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем, майăн 30-мĕшĕ тĕлне 12.213 гектар вырăнне 12.234 гектар акса, çураки планне тултарчĕç.

Райсовет Исполкомĕн председателĕ— ХАБАРОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ — МИТЬКОВ.

* * *

ЭЛĔК, майăн 31-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем, паянхи кун тĕлне 12.805 гектар акас вырăнне 13.500 гектар акса, çураки планне ытлашшипех тултарчĕç.

Райсовет Исполкомĕн председателĕ— ФИЛИМОНОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ — ФЕДОТОВ.

* * *

МУРКАШ, майăн 31-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Çураки планĕ тăрăх районăн 11.623 гектар акмалла, майăн 31-мĕшĕ тĕлне 11.627 гектар акса, плана тултартăмăр.

Райсовет Исполкомĕн председателĕ— ФЕДОРОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ — ИЛЬИН.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 31-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Çураки планне майăн 31-мĕшĕ тĕлне район 100,7 процент тултарчĕ. Планран ирттерсе акас ĕç колхозсенче ăнăçлăн пырать.

Райсовет Исполкомĕн председателĕ— МАКЛАШКИН.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ — ВАХНИН.

* * *

КӲКЕÇ, майăн 31-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Паянхи кун тĕлне районри колхозсем, 12.050 гектар вырăнне 12.060 гектар акса, çураки планне тултарчĕç.

Райсовет Исполкомĕн председателĕ— МИРОНОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ — КАРАУШЕВ.

* * *

КАЛИНИНО, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Паян районри колхозсем çураки планне тултарчĕç. 12.147 гектар вырăнне 12.150 гектар акрĕç. Планран ирттерсе акас ĕç малалла та пырать.

Райсовет Исполкомĕн председателĕ— ВАЛЕЕВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ — КУДРЯШОВ.

* * *

СĔНТĔР, июнĕн 1-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Районри колхозсем ĕнерхи кун тĕлне çураки планне 100,1 процент тултарчĕç. План тăрăх 11.960 гектар акас вырăнне 11.972 гектар акнă. Планран ирттерсе акас ĕç колхозсенче малалла та пырать.

Райсовет Исполкомĕн председателĕ— СВЕШНИКОВ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ — ПЕТРОВ.

Çар çыннисен çемьисене пулăшма

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Пуснаркассинчи «Сĕнтĕрпуç» колхоз (председателĕ Миронов юлташ) фронтовиксен çемьисене ялана пулăшса тăрать. Халĕ колхоз фронтовиксен çемьисем валли планран ирттерсе 1,5 гектар тĕштырă акса хăварчĕ.

Колхоз çар çыннисен çемьисене 25 пăт тырă, 28 пăт çĕрулми, 210 тенкĕ укçа парса пулăшрĕ.

Н. ШУÇАМ.

ÇУРАКИНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ВУНАКУНЛĂХ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне)

Районсем	Мĕнле вырăн йышăнать
Красноармейски	1
Элĕк	2
Чурачăк	3
Сĕнтĕрвăрри	4
Çĕрпӳ	5
Вăрнар	6
Муркаш	7
Сĕнтĕр	8
Шупашкар	9
Калинино	10
Октябрьски	11
Вăрмар	12
Куславкка	13
Ишлей	14
Шăхасан	15
Елчĕк	16
Канаш	17
Етĕрне	18
Советски	19
Тăвай	20
Комсомольски	21
Йĕпреç	22
Чкаловски	23
Çĕмĕрле	24
Улатăр	25
Первомайски	26
Пăрачкав	27
Хĕрлĕ Чутай	28
Шăмăршă	29
Кувакино	30



Çуракинче тухăçлă та лайăх ĕçленĕшĕн, ĕççынни депутачĕсен Шăхасан райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп Хăми çине çак трактор бригадисене кĕртнĕ:

43. 6-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Н. Тимофеев юлташ). Çак бригада тракторпа çурхунне тумалли ĕçсен планне 124 процент тултарнă, 392 гектар сухалас вырăнне 483 гектар сухаланă. ĕç пахалăхĕ аван. 350 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

44. 1-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Я. Сергеев юлташ). Çак бригадăн çуркунне план тăрăх 292 гектар сухаламалла пулнă, вăл 348 гектар сухаласа плана 120 процент тултарнă. Ĕç пахалăхĕ аван. 148 килограмм горючи перекетленĕ.

45. 8-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Н. Чернов юлташ). Çак бригада çуркунне 292 гектар сухалас вырăнне 333 гектар сухаланă, плана 113 процент тултарнă. Ĕç пахалăхĕ аван. 380 килограмм горючи перекетленĕ.

46. 4-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Н. Александров юлташ). Çак бригада çуркунне 292 гектар вырăнне 318 гектар сухаланă, ĕç пахалăхĕ аван. 270 килограмм горючи перекетленĕ.

47. 10-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ А. Григорьев юлташ). Çак бригада çуркуннехи ĕçсен планне 104 процент тултарнă (254 гектар вырăнне 263 гектар сухаланă), 178 килограмм горючи перекетленĕ.

48. 5-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Сидоров юлташ). Çак бригада тракторсемпе çуркунне тумалли ĕçсен планне 102 процент тултарнă (390 гектар сухалас вырăнне 398 гектар сухаланă), çав вăхăтрах 276 килограмм горючи перекетленĕ.

Калинино МТС-ĕ плана тултарнă

Майăн 30-мĕшĕнче Калинино МТС-ĕ тракторсемпе çуркунне тумалли ĕçсен планне тултарнă. Çемçе суха çине кусарса шутласан, 2500 гектар сухалас вырăнне 2.515 гектар сухаланă, 1.880 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

* * *

Ĕнер пирĕн «Чăваш Коммуни» редакцийĕн сотрудникĕ Калинино МТС-ĕн директорĕпе А. Ф. Волков юлташпа телефон тăрăх сыхăнчĕ. Волков юлташ çапла каласа пачĕ: «Пирĕн МТС-а кăçал организациленĕ. Паллах, МТС ĕçĕнче нумай йывăрлăхсем пулчĕç, горючисене хатĕрлеме çителĕклĕ баксемпе пичкесем пулман, тракторсем те нумайĕшĕсем кирлĕ пек ĕçлемен. Акă, Етĕрне МТС-ĕнчен илнĕ «ПАТИ» маркăллă 3 трактор илер. Вĕсем, япăх юсанă пирки, çуракинче ĕç лекмерĕç. Трактористсемпе трактористкăсен пĕр пайĕ çамрăксем пулнă, ĕçри опыт вĕсен пысăках пулман. Анчах та пирĕн МТС коллективĕ, çав йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерсе, çуркунне тумалли ĕçсен планне тултарчĕ, кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа эпир сезонра 88 гектар сухаласа вырăнне 114-шар гектар сухаларăмăр.

Уйрăмах Е. Иванов ертсе пыракан 6-мĕш номерлĕ трактор бригади ăнăçлă ĕçлерĕ, вăл хăйĕн планне 135 процент тултарса, 542 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çак бригадăри М. Моисеева трактористка çураки вăхăтĕнче 44 гектар вырăнне 72 гектар сухаларĕ, Е. Андреева юлташ 70 гектар, М. Илларионова—67 гектар сухаланă. Смирновпа Степанов трактористсем çуркуннехи ĕçсен планне 140-шер процент тултарчĕç.

9-мĕш номерлĕ трактор бригади те (бригадирĕ М. Андреев) хăйĕн планне 134,5 процент тултарчĕ, 412 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Григорьев юлташ ертсе пыракан 5-мĕш бригада плана 106 процент тултарчĕ, 324 килограмм горючи перекетлерĕ. Вазанов юлташ ертсе пыракан пĕрремĕш бригада та, плана 104 процент тултарса, 323 килограмм горючи перекетлерĕ.

МТС-ăн старши механикĕ В. Ф. Ремизов юлташ трактористсемпе трактористкăсене техникăллă пулăшу парас тĕлĕшпе кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Парти организацийĕ (секретарĕ П. С. Чугунов юлташ) массăллă-ăнлантару ĕçе уйрах, ĕçленĕ çĕртех, организацилерĕ.

МТС коллективĕ çак малтанхи çитĕнӳпе чарăнса тăмасть, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, татах та çитĕнӳсем тăвассишĕн вăя хурса кĕрешетпĕр».

Ăмăрту вăйĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Туçа ялсоветĕнчи колхозсем кăçал агротехника кăтартăвĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пынă. «Комбайн» колхоз (председателĕ И. Кузьмин юлташ) пĕтĕм тĕштырăсенчен 70 процентне машинăпа, вăрлăхсене йăлтах яровизацилесе е имçамсемпе чӳхесе акнă. Буденный ячĕпе тăракан колхоз 50 гектар çĕре иртнĕ çулхи çумкурăксемпе хăмăлсенчен тасатса сухаланă. Тĕштырăсене лайăх пахалăхпа акса хăварас тĕлĕшпе кашни колхозрах пахалăх комиссийĕсем тунă. Колхозсенче столовăйсем уçнă, хирте ĕçлекенсене кунне икшер хут апат çитернĕ.

Çак ялсоветĕнче ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ пулса Нина Бурмистрова ĕçлет. Çавăн пекех ялти коммунистсемпе ялсоветĕн активĕ те çуракине большевикла ертсе пыраççĕ. Вĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр уйхирте пулса, колхозниксене гектартан 100-шер пăт тырă туса илессишĕн кĕрешме мобилизацилесе пыраççĕ. Уйхирте ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе кăтартуллă йĕркеленĕ. Малта пыракан колхозсемпе бригадăсен опычĕ сарса пынă.

Çуракин малтанхи кунĕсенчех Буденный ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ фронтовик П. Павлов юлташ) малта пынă. Колхозăн çурхи тĕштырăсене пĕтĕмпе 318 гектар акмалла пулнă пулсан, вăл 333 гектар, планран ирттерсе 15 гектар акса хăварнă. Çураки планне майăн 25-мĕшне тултарнă. Кунта ĕç лашисем ытти колхозсенчен чылай тĕреклĕрех. А. Андреевăпа А. Федорова конюхсем пăхнă лашасем уйрăмах чăтăмлă ĕçленĕ. Комсомолецсемпе правлени членĕсем ĕç лашисене тĕрĕслесе тăраççĕ, конюхсене кирлĕ кăтартусем параççĕ. Кăçал комсомолецсен вăйĕпе 4 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ, вĕсемпе тăтăшах уя вăрлăх турттарнă.

Колхозра вăйлă тырпулшăн пыракан социализмлă ăмăрту ĕç пахалăхĕпе хăвăртлăхне ӳстернĕ. Стахановецсене палăртса пыма колхозра кăтарту хăми тунă, çĕнĕ хаçатсен витринине организациленĕ. Агитколлектив «Фронтовик» ятлă стена хаçачĕ кăларса тăрать.

Колхозри опытлă колхозниксем çамрăксене ĕçлеме вĕрентсе пынă. Акă Марфа Антонова колхозница кăçалччен тырă акса курман. Т. Павлов колхозник вĕрентнипе вăл лайăх тата хăвăрт акнă. 60 çулхи Е. Павлов колхозник армантамельник пулса ĕçленĕ хушăрах сӳреленĕ çĕре те хутшăннă. Л. Демидов, Н. Громилов, Е. Антонов, А. Иванов комсомолецсем суха-сӳре ĕçĕнче кулленхи нормăна 130—150-шар процент тултарса пынă.

Пахалăх комиссийĕ (ăна 75 çулхи Д. Архипов колхозник ертсе пырать) акапа суха пахалăхне ӳстерме чылай пулăшнă. Начар сӳреленĕ вырăнсене тепĕр хут сӳрелеттернĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем малтанхи кунсенче ăшăх сухаланă. Пахалăх комиссийĕ çавна асăрханă, ун хыççăн вĕсем çав çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтернĕ.

Бригадăсем хушшинчи ăмăртура Мария Данилова ертсе пыракан бригада малта пырать. Данилова юлташ кăçал ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри слетĕнче пулнă. Вăл слетра палăрнă опытпа хăйĕн ĕçĕнче туллин усă курать. Тăваттăмĕш çул бригадирта ĕçлесе, ĕç майне аван вĕренсе çитнĕ вăл. Çуракине ытти бригадăсенчен икĕ кун малтан вĕçленĕ, вара ыттисене пулăшнă. Ку бригадăри чи ĕçчен колхозницăсем М. Константинова, А. Иванова, Е. Иванова, М. Илларионова юлташсем кунсерен пĕрер гектар вырăнне 1,26—1,30-шар гектар сухаланă. Т. Емельяновăпа С. Федотова колхозницăсем кăçал ĕçе вĕрентнĕ вăкăрпа 2 сухрăмран 20-шар пăт вăрлăх турттарса тăнă. Çапла вĕсем пĕр вăкăрпа кăна 75 гектар çине акмалăх вăрлăх турттарнă.

Ялсоветне 4 колхоз кĕрет. Вĕсем пурте майăн 26-мĕшне çураки планне тултарчĕç. Халĕ вĕсем «Авангард революции» колхоза пулăшаççĕ. Çак кунсенче колхозниксем капăрсене çумкурăкĕсенчен тасатма тытăнчĕç.

З. МИТРОФАНОВА,
(Хамăр корр.).

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ СЕВАСТОПОЛЬТЕ. Ӳкерчĕк çинче: Ленин площадĕнче Совегсен Тинĕс-çар флагне çирĕплетсе çакаççĕ.

Е. ХАЛДЕЙПА Б. ВЕЛЬЯШЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ çинчен

Шкулсенче çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕ пуçланнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Çав хушăра IV-мĕш, V-мĕш тата VI-мĕш классенче пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пулса иртрĕç.

Республикăри чылай шкулсем кăçалхи тĕрĕслеве государство тĕрĕслевĕ вырăнне хураççĕ. Учительсем, шкул ачисен пĕлĕвне ӳстерес задачăна лартса, отметкăсем тĕлĕшпе ответлăха чылай ӳстерчĕç. Çавăн пекех ассистентсен вырăнĕ те ӳсрĕ. Ассистентсем тĕрĕслӳре, çапла лараканнисем кăна мар, сутĕç органĕн представителĕсем пулса, ачасен пĕлĕвне тĕрĕслеççĕ. Çапла, Шупашкарти хĕрачасен 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче IV-мĕш «А» класра вырăс чĕлхипе пулнă тĕрĕслӳре ассистент, ачасем тĕплĕнрех ответ параймасассăн, çĕнĕрен ыйтусем парса вĕсен чăн-чăн пĕлĕвне тĕпчеме пултарнă.

[illegible] ачасем вĕрентӳ программине йăнăшсăр вĕçлерĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, ачасем тĕрĕслӳре пур предметсенче те [illegible]. Тăвай вăтам шкулĕнчи X-мĕш класра литература предмечĕпе çырнă сочиненире 11 ачаран иккĕшĕ пятеркăпа, 6-шĕ четверкăпа, 3-шĕ тройкăпа илнĕ. Вăрнар районĕнчи Вăрманкасси 7 çул вĕренмелли шкулта VI-мĕш класра алгебра предмечĕпе 20 ачаран 3-шĕ кăна тройка, ыттисем йăлтах пятеркăсемпе четверкăсем илнĕ.

Анчах та тĕрĕслӳре çитменлĕхсем те пур-ха. Канаш районĕнчи 7 çул вĕренмелли шкулсенчен пĕринче [illegible] А. юлташ V-мĕш класри тĕрĕслӳ пуçланиччен ачасене [illegible] билечĕсен ыйтăвĕсене [illegible]. Çакăн пек факт [illegible] шкулта вĕрентекенсем алгебрăпа геометри предмечĕсем тăрăх [illegible]. Сутĕç Халăх Комиссариачĕн çакăн çинчен [illegible] тĕрĕслӳ [illegible].

Вĕрентӳ ĕçне ăмăртăва пăрахăçлани тата учитель ĕçне [illegible] пĕлĕвне тĕрĕслемелли [illegible] практикăна чарса тăрать. [illegible] учительсене вĕрентекенсен пĕлĕвне [illegible] хакламан. Учительсем шкул ачисен чăн-чăн пĕлĕвĕсене çеç шута илмелле. Анчах Шăхасан районĕнчи Калининский [illegible] ассистент ачасен пĕлĕвне тĕрĕс хакламан. Чăваш чĕлхипе çырнă диктанта пĕр [illegible] единица [illegible]. Калинин районĕнчи [illegible] шкулĕнче 10-мĕш класра [illegible] сочинение [illegible]. Учитель ăна тройка панă.

Ачасен пĕлĕвне хаклас [illegible]. Шупашкарти шкулсенчен пĕринче [illegible] тĕрĕслӳре учительпе ассистент [illegible].

[illegible]

Мĕншĕн-ха çакăн пек факт пулма пултарать? Сутĕç Халăх Комиссариачĕ инструкцисем тăрăх тĕрĕслӳ [illegible] тĕрĕслӳ протоколĕсене шкулсенче [illegible]. Шкул директорĕсем тĕрĕслӳ протоколне [illegible] шкул [illegible] государство документĕ вырăнне [illegible]. Директор, тĕрĕслӳ протоколĕсене çирĕплетсе, ачасен пĕлĕвне [illegible] тĕрĕслеме учительсене [illegible].

Пĕлӳ тĕрĕслевĕн халь пĕтмен-ха, малалла пырать. Директорсемпе ассистентсен тата учительсен пĕлӳ тĕрĕслевĕн [illegible] йĕркипе тишкерсе пулнă йăнăшсене шута илмелле. Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче ни пĕчĕк йăнăш та государство мероприятийĕн [illegible] вăрăмăпа чакарать.

Т. ЕФРЕМОВ.

ЧАССР Сутĕç Халăх Комиссариачĕн пуçламăшĕ вăтам шкулсен управленийĕн начальникĕ.

А. П. Чехов произведенийĕсене чăвашла кăларнă

Июлĕн 15-мĕшĕнче вырăссен чаплă писателĕ Антон Павлович Чехов вилнĕренпе 40 çул тулать.

Чехов произведенийĕсене Совет Союзĕнчи пурăнакан пур халăхсем те юратса вулаççĕ. Вĕсем чăваш халăхĕ хушшинче те саралнă.

Чăвашсен государство издательстви Чеховăн вуншар произведенине чăвашла куçарса кăларнă. Вĕсем хушшинче—«Чиэ сачĕ», «Сырмара», «Водевильсемпе интермедисем» тата калав сборникĕсем тухнă. Чехов калавĕсене пирĕн журналсенче те нумай пичетленнĕ.

Халĕ, А. П. Чеховăн юбилейĕ çывхарса килнĕ май, Чăвашгосиздат унăн калавĕсен сборникне тата «Палата № 6» ятлă повеçне уйрăм кĕнекесем туса кăларать.

Л. А.

Пушартан сыхланас ĕçе вăйлатар

Пушар тухас хăрушлăх çуллахи вăхăтра ыттисенчен те ытларах пулать. Çавăнпа та çуллахи вăхăтра хуласемпе поселоксене, предприятисене, вăрмансене, колхозсене пушартан сыхлас ĕçе тĕплĕн организацилемелле. Анчах ку ĕç çине пур çĕрте те тивĕçлĕ пек пăхмаççĕ-ха. Хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем пушартан сыхланмалли мероприятисене çирĕппĕн пурнăçа кĕртмеççĕ. Çавăнпа хăшпĕр районсенче пушарсем час-часах тухаççĕ.

Уйрăмах ĕçсыннисен пушартан сыхланас ĕçе явăçтарас [illegible]. Ялсенче пушар дружинисене [illegible]. Ятарласа [illegible] тата дружинăсенче ĕçлекен çынсем [illegible]. Государствăна халăх пурлăхне пушартан сыхласа хăварас тесен, чи малтанах, пушартан сыхланмалли мероприятисене пурнăçа кĕртмелле. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен, колхоз председателĕсен тата пĕтĕм ĕçсыннисен хăйсен хуçалăхĕсенче тивĕçлĕ йĕркелĕх тумалла. Килкартисене çӳп-çапсенчен тасатмалла, пушарпа кĕрешмелли инвентарьсене юсаса хатĕрлемелле, çуртсем çывăхĕнче шыв тултарнă каткасемпе пичкесем лартмалла, пĕвесемпе çăлсене юсамалла.

Ялсенчи пушар дружинисен тата предприятисенчи пушар командисен ĕçне лайăхлатасси çине тимлĕн çаварăнса пăхас пулать. Дружинăсемпе командăсенче ĕçлеме çынсем çителĕклĕ уйăрмалла. Пушарпа кĕрешмелли инвентарьсене яланах юсавлă тытмалла.

Пушарсем час-часах вут-кăвара тирпейсĕр тыткаланинчен тата ача-пăчасем вут-кăварпа выляннинчен тухаççĕ. Çавăнпа та вут-кăвар тыткаланă чухне пушара хирĕç кĕрешмелли мероприятисене çирĕппĕн пăхăнса пымалла. Кăмакасене яланах юсавлă тытмалла, ачасем вут-кăвар тыткаласси(н)чен сыхланмалла. Ку ĕçе тума ĕçсыннисен анлă массине явăçтармалла.

Ялсенче пушарсем пуласпне пĕтерес ĕçре çурт-йĕрсене çунман материалсенчен туни пысăк вырăн йышăнать. Çурт-йĕрсене кирпĕчрен тата ытти çавăн пек материалсенчен тăвассине, çуртсем çине черепица, тăмпа хутăштарнă улăм витессине анлăн сармалла. Çуртсем хушшинче тата урамсенче çулçăллă йывăçсем лартассине вăйлатмалла.

Пушар дружинисемпе командисен хуласемпе ялсенче пурăнакан халăх хушшинче пушара хирĕç кĕрешмелли мероприятисем çинчен ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса пымалла.

ЖЕЗЛОВ.

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ АНЦИО ХУЛИПЕ АЛЬБАНО ХУШШИНЧИ ÇУЛА ТАТНИ

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Веллетрирен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсене хирĕç тăшман питех те хытă хирĕç тăрса çапăçать.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕн пысăк вăйĕсем Лири шывĕ урлă каçнă та Виа Касселина шоссе çулĕ тăрăх малалла куçса пыраççĕ. Çĕнĕ Зеланди çарĕсем çак шоссе çулĕнчен çурçĕртерехри тусем çинче самаях малалла куçнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсене тата унăн Италири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Союзниксен авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсен питех те пысăк вăйĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Вена районне пыра-пыра тапăннă. Вĕсем Волерсдорфри аэродром çине, Винер-Нейштадтри авиаци завочĕпе аэродром çине, Атцгерсдорфри авиаци завочĕсемпе чугун çул станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Вăтам бомбардировщиксем иртнĕ çĕр Фрюрсбруннри (Венăран 35 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре) вăрçă объекчĕсене тапăннă. Союзниксен авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсен ытти соединенийĕсем Югославин вăтаçĕрти пайĕнче пĕр çĕре пухăнса тăнă тăшман çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Çак операцисем вăхăтĕнче тăшманăн 68 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 34 самолет хăйсен базисене таврăнман.

АЛЖИР, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ паян пичетлесе кăларнă хыпарсем тăрăх, Итали фронтĕнче наступлени пуçланса кайнăранпа нимĕçсен 71-мĕш, 94-мĕш тата 715-мĕш дивизийĕсене аркатса тăкнă. Тыткăна илнисен шучĕ халăхи вăхăтра 15 пин çынтан иртсе кайнă.

Юлашки хыпарсем тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Веллетри хули тулашне çапăçса кĕрсе кайнă.

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем юлашки операцисенче Римран кăнтăртарахра тăракан нимĕç дивизийĕсен каялла чакмалли çулне татнă.

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн Вальмонтонерен пуçласа тинĕс хĕррине çитиччен-хи мĕншур участокра тăшман хытă хирĕç тăрса çапăçать. Нимĕçсем хăйсен çак участокри позицийĕсене тем пулсан та хăйсен аллинче тытса хăварма тăрăшаççĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Лири шывĕ урлă каçнă хыççăн пĕр чарăнмасăр малалла куçса пыраççĕ. Тăшман аръергачĕсем, союзниксен çарĕсем малалла каясси не чарма хăтланса, хăйсем хыççăн питĕ вăйлă ишсе хăвараççĕ. Союзниксен çарĕсене хирĕç вăйлăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Çапах та союзниксен çарĕсем, вĕсене çĕмĕрсе тăкса, Альфедена, Фонтана, Странголагалле, Пофи, Чеккано (Фрозинонерен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) тата Арпино (Фрозинонерен хĕвелтухăçнерехре) ятлă пунктсене туртса илнĕ.

Союзниксен сывлăш-çар вăйĕсем ĕнер тăшман çулйĕрĕсене тата фронт линийĕнчи объектсене çĕмĕрсе пынă. Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири объекчĕсене атакăланă. Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем Винер-Нейштадт районĕнчи (Австри) авиаци завочĕпе авиадетальсен заводне, Вельсри (Австри) авиаци завочĕпе аэродрома, çавăн пекех тата Загребри (Югослави) чугун çул станцийĕпе аэродрома тапăннă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 2.400 вĕçев ытла тунă.

ИТАЛЬЯНЕЦСЕН «ИРĔКЕ КĂЛАРАКАН КОРПУСĔ» РИМШĂН ПЫРАКАН ÇАПĂÇУСЕНЧЕ ВĂРÇАТЬ

БАРИ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Итальянецсен генеральнăй штабĕн начальникĕ маршал Мессе паян çапла пĕлтернĕ: итальянецсен «ирĕке кăларакан корпусĕ» союзниксен çарĕсемпе пĕрле Римшăн пыракан çапăçусенче тăшмана хирĕç активлăн вăрçать.

ГАРИБАЛЬДИ ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ПАРТИЗАНСЕН БРИГАДИН ВĂРÇА ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Италире вăрттăн кăларса тăракан «Салтак сасси» ятлă хаçат Гарибальди ячĕпе тăракан партизансен бригадин вăрçă ĕçĕсем çинчен çапла çырать: юлашки вăхăтра кăна гарибальдиецсем 700 гитлеровеца яхăн тата 800 итальянец-фашиста яхăн пĕтерсе тăкнă. Халĕ çав бригада самаях пысăк районсене тĕрĕслесе тăрать, ăçта май килнĕ çĕртре вăхăтлăха халăх влаçĕ тăвать. Хăйсем йышăннă ялсемпе округсенче партизансем вырăнти халăха пулăшу параççĕ, вĕсем халăха оккупантсенчен туртса илнĕ апат-çимĕçе валеçсе параççĕ. Партизансем халăха сутакан фашистсене суд тăваççĕ.

Ирĕке кăларнă районсенчи çынсем хăйсен ирĕкĕпех бригадăри патриотсен ретне тăраççĕ. Çапла бригадăри боецсен йышĕ ӳссех пырать. Гарибальди ячĕпе тăракан бригада çĕнĕ операцисем тăвать, вăл тăшманăн чугун çулĕсене, нимĕçсен çарĕсене тапăнать.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 30-мĕшĕнче 8-мĕш авиаци корпусĕнчи «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, 1.200 истребитель хӳтĕлесе пынипе, Германири 3 авиаци завочĕпе 6 аэродрома, Бельгипе Францири 3 чугун çул деповне тата Паде-Кале районĕнчи çар сооруженийĕсене тапăннă.

Майăн 30-мĕшĕнче сĕм тĕттĕм пулса çитсен, 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан «Лайтнинг» йышши самолетсемпе «Сандерблот» йышши истребитель-бомбардировщиксем Париж районĕнчи кĕперсемпе ытти вăрçă сооруженийĕсене тата Антверпен хулинчи пĕр объекта тапăннă.

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: «Вĕçекен крепость», тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен чылай пысăк соединенийĕсем паян ирхине Германин Гаммри, Оснабрюкри, Швертри (Дортмундран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре) тата Зэстри (Гамран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре) чугун çул деповĕсене, çавăн пекех тата нимĕçсен Мюльюзран (Франци) хĕвеланăçнерехри аэродромне тапăннă. Америка бомбардировщикĕсене 1.200 истребителе яхăн хӳтĕлесе пынă.

ЛОНДОН, майăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Франци çыранĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Майăн 30-мĕшĕнче кăнтăрла союзниксен авиацийĕ тăшманăн Францири çулйĕрĕсене тапăннă. Пуринчен те ытларах Сена шывĕ çинчи кĕперсене тапăннă. Сена шывĕн 100 миля тăршшĕнче 9 кĕпере, çавăн пекех тата Çурçĕр Францири аэродромсемпе ытти вăрçă объекчĕсене атакăланă. Американецсен 7 истребителĕ хăйсен базисене таврăнман.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ПЛОЕШТИ ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: американецсен бомбардировочнăй авиацийĕн пысăк вăйĕсем паян Румынин нефть районне—Плоешти хулине тапăннă.

ЭКВАДОРТИ ПĂЛХАВ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эквадорта хĕçпăшаллă вăйсен тата граждăнла халăхăн пăлхавĕ пуçланса кайнă. Пăлхава президент пулнă Велоско Ибарра майлă тăракан çынсем ертсе пыраççĕ. Веласко Ибаррана Эквадорти фашизма хирĕçле ушкăнсемпе профсоюзсем каллех президента лартасшăн тăрăшаççĕ.

Юлашки хыпарсем тăрăх, Эквадорта вăхăтлăх правительство тунă. Çав правительство составне ытти партисен представителĕсемпе пĕрле Эквадорти коммунистсен партин генеральнăй секретарĕ Саад та кĕнĕ.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕСЕМ

Геройсем çинчен çырнă кĕнекесем

Чăвашгосиздат юлашки вăхăтра хамăрăн земляксем—Отечественнăй вăрçă геройĕсем çинчен çырнă кĕнекесем чылай кăларчĕ. Уйрăм серипе Совет Союзĕн Геройĕсем—Федот Орлов, Вячеслав Винокуров, Павел Лаптев, Геннадий Габайдуллин, Мирон Ефимов çинчен çырнисем тухрĕç. Çитес кунсенче Михаил Сапожниковпа Иван Поляков çинчен уйрăм кĕнекесем тухаççĕ. Аркадий Эсхелĕн «Ăмăрткайăк» ятлă поэми (Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов çинчен) уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать.

Кунпа пĕрлех, Чăвашсен Государство Издательстви фронтсенче паттăррăн çапăçса Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илнĕ земляксем çинчен çырнă очерксен сборникĕсем кăларать. 1943-мĕш çулта «Чăваш халăхĕн ывăлĕсем» ятлă чылай пысăк кĕнеке кăларнăччĕ. Çак кунсенче татах «Чăваш ывăл-хĕрĕсем» ятлă сборник тухрĕ. Унта пурĕ 26 очерк кĕнĕ.

Сборник ăна пухса хатĕрленĕ П. Н. Николаев юлташ çырнă умсăмахпа уçăлать. Тӳррипех каласс пулать, сборникĕ çавăн пек статьяпа уçни питĕ вырăнлă, мĕншĕн тесен вулакансене çак кĕнекене епле задачăсемпе кăларнине, чăваш ывăл-хĕрĕсем хамăрăн Тăван çĕршывшăн, Совет влаçĕшĕн граждăн вăрçи вăхăтĕнче те, хальхи вăçăра та епле хастарлăн çапăçнине, пирĕн халĕ правительство наградисене илнĕ паттăрсем мĕн чухлĕ пулнине калаçа парать.

Кĕнекене кĕртнĕ очерксем пысăк мар. Вĕсем 3—4-шар страница çеç йышăнаççĕ, анчах вĕсене пĕрине те хумханмасăр вулаймастăн. Кашни очерк конкретлă паттăррăн тĕлĕнмелле хăюллă ĕçĕсем çинчен пĕлтерет. Вулакан ку кĕнекерен пирĕн земляксен — пехотинецсен, артиллеристсен, летчиксен, танкистсен, саперсемпе разведчиксен, автоматчиксемпе медработниксен нихăçан манми паттăрла ĕçĕсем çинчен пĕлет.

Ку кĕнеке кашни библиотекăра çеç мар, кашни ĕçсыннин, уйрăмăнах колхозниксемпе предприятисенче ĕçлекен çамрăксен аллинче пулмалла.

Эпир ăна пурне те вуласа тухма сĕнетпĕр.

Шел, кĕнекен тиражĕ пысăк мар, пурĕ те 3000 экземпляр кăна. Малашне Чăвашгизăн кун пек кĕнекесене пысăкрах тиражпа кăларас пулать.

Л. АГАКОВ.

„Илемлĕ литература" альманахăн 17-мĕш кĕнеки

Чăваш совет писателĕсен Союзĕ кăларакан «Илемлĕ литература» альманахăн 17-мĕш кĕнеки пичетрен тухрĕ.

Проза пайĕнче Л. Агаков, Хветĕр Уяр, Ф. Ситта, В. Ахтубай писательсен калавĕсемпе очеркĕсем пур. Кунсăр пуçне А. П. Чеховăн икĕ калавне чăвашла куçарнă.

Поэзи пайĕнче Аркадий Эсхель, Уйăп Мишши, И. Малгай, В. Ахтубай поэтсен произведенийĕсем. Çĕнĕ авторсенчен З. Семеновпа С. Алексеевăн сăввисем пур. Çавăн пекех И. А. Крыловăн юптарăвĕсем (вырăсларан Стихван Шавлы куçарнă) пичетленсе тухнă.

Уйрăмăнах альманахăн фольклорпа вырăс пайĕсем тата критикăпа библиографи пайĕ аслăннине палăртмалла.

Фольклор пайĕнче Иван Мучи пухнă сăвă-юрăсемпе «Таврăн» юмах, ваттисен сăмахĕсем пысăк вырăн йышăннă. Çавăн пекех Кашкăр Микулин «Фюрерĕн хӳри таталнă» юмахĕпе А. Антоновăн «Качкан мучи юмахĕ» пичетленсе тухнă.

П. Хусанкайăн «Энтри Аптраман», В. Хударсен «Тăван çĕршыв» сăввисене, И. Тукташăн «Шурнăçпа вилĕм» ятлă прозăллă сăввине, Хветĕр Уярăн «Шурлăхри вилĕм» калавне вырăсла куçарнă. Кунпа пĕрлех Сергей Макаровăн, И. Красновăн, Валентина Чаплинăн вырăсла сăввисем пичетленсе тухнă.

Критикăпа библиографи пайĕнче чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер çырнă «Тăван героя аслăлакан поэма» ятлă статья (А. Эсхелĕн «Ăмăрткайăк» поэми çинчен) тата Л. Агаковăн «Писатель-боец кĕнеки» ятлă статьи пичетленсе тухнă.

Юрăпа ташă ансамблĕ гастрольте тухса кайрĕ

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ çак кунсенче Куйбышев облаçĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ чĕннипе Куйбышев облаçне гастроле тухса кайрĕ.

Ансамблĕн концерчĕсем Куйбышев хулинче, унтан Куйбышев облаçĕнчи чăвашсем пурăнакан районсенче пулаççĕ. Гастролĕн срокĕ—пĕр уйăх.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ПРИВО Военторгĕн Шупашкарти отделенине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: бухгалтер-ревизор, бухгалтер-инспектор, общепитăн главнăй бухгалтерĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 2, отдел кадров.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса пырассишĕн

Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташ фронтпа çĕршыв валли тырпулпа апат-çимĕç, промышленность валли чĕр тавар ытларах та ытларах парса тăма хушнине пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешсе, Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн продуктивноçне ӳстерес енĕпе паллă çитĕнӳсем турĕç. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче мăйракаллă шултăра выльăхсен шутне икĕ хут, сыснасен шутне 1,5 хут, сурăхсен шутне виçĕ хут ӳстернĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес енĕпе те çитĕнӳсем тунă. Кашни сăвакан ĕнерен 525 литр сĕт ытларах суса илнĕ, 100 ĕне пуçне, вăрçăчченхипе танлаштарсан, 9,3 пуç пăру, 100 сурăх пуçне 15 пăтек, кашни сысна ами пуçне 5,2 сысна çури ытларах илнĕ.

Пирĕн районри колхозсем иртнĕ çул выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарчĕç. Мăйракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли плана 119 процент, сыснасем енĕпе—118 процент, сурăхсем енĕпе—121 процент тултарнă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен хăтарнă районсенчи колхозсене пулăшма 195 сурăх та 201 сысна янă. Районри 113 колхозран мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе государство планне 106 колхоз, сыснасем енĕпе 99 колхоз тата сурăхсем енĕпе 108 колхоз тултарчĕç. Малта пыракан колхозсем тата лайăхрах ĕçленине кăтартса пама пулать. Сăмахран, «Ĕмĕт» колхоз мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе государство планне 126,3 процент, сыснасем енĕпе 187,5 процент, сурăхсем енĕпе 135 процент тултарнă. «Красный бригадир» колхоз мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 120 процент, сыснасем енĕпе 140 процент, сурăхсем енĕпе 162,7 процент тултарнă.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕршер стахановецсем—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсем çитĕнчĕç. «Пожанар» колхозри фермăсен заведующийĕ М. В. Власова юлташ кашни сысна аминчен 15,6 çурă илсе ӳстернĕ. «Пионер» колхозри пăру пăхакан Сергеева юлташ 25 пăру çитĕнтернĕ, вăл ĕçленĕ вăхăтра пĕр пăру та вилмен. «Этна» колхозри сурăх пăхакан Иванова юлташ 100 сурăхран 180 пӳтек çитĕнтернĕ.

Çакăн пек лайăх ĕçленĕшĕн, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ тăрăх, районри 183 колхозника ĕçкунĕсем çумне хушса тӳленĕ. Вĕсенчен дояркăсем 31 çын, пăру пăхакансем—25, сысна пăхакансем—29, сурăх пăхакансем—26, кайăк-кĕшĕк пăхакансем—16, конюхсем—29, хуртхăмăр пăхакансем—5.

«Богатырь» колхозри сысна пăхакан Е. Е. Ефремов юлташ хушса тӳлемелли йĕркепе 3 сысна çури илнĕ, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри доярка Иванова юлташ 186 литр сĕт, «Этна» колхозри сурăх пăхакан Иванова та икĕ тир илнĕ.

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе çитĕнӳсем тунăшăн пирĕн района виççĕмĕш преми — 100.000 тенкĕ укçа пама йышăнчĕ. Çак укçапа выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе лайăх ĕçленĕ колхозниксене премилетпĕр.

1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе çитĕнӳ тума, чи малтанах, колхозсене çак ĕçре пĕлсе ертсе пыни, вăхăтра пулăшни май пачĕ. Эпир çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес ĕçе пысăк вырăна хутăмăр. Зоотехниксемпе ветеринарсене колхозсен çумне çирĕплетсе, фермăсенче зоотехникăпа ветеринари правилисене мĕнле пурнăçласа пынине çирĕппĕн контроллесе тăнă.

Фермăсенче ĕçлеме çынсем суйласа илесси тата вĕсене унта çирĕплетесси пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та ферма работникĕсем пирĕн нумай вăхăт хушши ĕçлеççĕ, хăйсен ĕçне лайăх пĕлеççĕ. Фермăра ĕçлекенсене сдельщина тăрăх ĕçкунĕ тӳлетпĕр. Выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлекенсем конкретлă обязательствăсем илнĕ, вĕсене пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пирĕн район тунă çитĕнӳсене партипе правительство пысăка хурса хакланипе кăçал ку енĕпе татах та лайăхрах ĕçлеме хушать. Çак ĕçе иртнĕ çулхинчен лайăхрах тума пирĕн пур условисем те пур. Хальхи вăхăтра эпир çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтерес, чуптару кампанине ăнăçлă ирттерес тата выльăхсен апат базине лайăхрах тăвас ыйтăва пĕлмесĕр ĕçлетпĕр.

Халь уйрăмах выльăх апачĕн базине тăвасси пысăк вырăн йышăнать. Çакна шута илсе, выльăхсем валли тымар-çимĕç тата силослăх культурăсем акмалли плана 100 процент тултартăмăр, нумай çул хушши ӳсекен курăксем 302 гектар, пĕр çул ӳсекен курăксем 500 гектар акнă. Унсăр пуçне пирĕн кашни ферма çумĕнчех уйрăм çĕр лаптăкĕсем пулаççĕ. Унта эпир выльăх тăшманĕсем, çĕрулми тата тĕрлĕ курăксемпе тĕштырăсем акатпăр, пурĕ 293 гектар акмалла. Ферма çумĕнчи участоксене «Ĕмĕт» колхоз 5 гектар, «Пионер» колхоз 3 гектар, «Сталинец» колхоз 3 гектар акнă. Районĕпе майăн 25-мĕшĕ тĕлне 187 гектар акнă. Планпа пăхнинчен ирттерсе акма шутлатпăр. Кăçал эпир вĕлтĕрен, эрĕм утă, йывăç турачĕсем, тăкăннă çулçă тата йĕкел нумай пухма шутлатпăр. Ку енĕпе кашни колхозрах çирĕп план туса хатĕрленĕ, çак ĕçсене йăлтах выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем тăваççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ытлашшипех тултарассишĕн, выльăх-чĕрлĕх апачĕн çирĕп базине тăвассишĕн пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ, малашне те ырми-канми ĕçлĕç.

Д. МИТЬКОВ,

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00158. Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.